Олимпиадные задания по чувашскому языку и литературе
для муниципального тура республиканской олимпиады
школьников общеобразовательных организаций
с обучением на чувашском языке
2017-2018 учебный год. 7 класс

Максимальный балл – 50
Время выполнения – 90 минут

1. Çак йĕркесен авторĕ кам? Ятне, ашшĕ ятне, хушаматне туллин çырăр.

(1)*Атте-анне чĕлхи – пирĕн тăван чĕлхе.* (2)*Тăван сăмах, тăван чĕлхе – халăх чунĕ.* (3)*Унăн паянхи кунĕ, малашлăхĕ.* (4)*Унсăрăн халăх çук.* (5)*Пулас ăрава тĕрĕс пăхса çитĕнтересси чи малтанах тăван чĕлхе хисепĕнчен, чысĕнчен килет.* (6) *Шкулта тăван чĕлхе – пĕрремĕш предмет.*

2. Синонимсем текстăн хăш предложенийĕнче тĕл пулаççĕ? Синонимсене пуçламăш формăра çырса парăр, вырăсла куçарăр.

3. *Малашлăхĕ* сăмахăн кашни пĕлтерĕшлĕ пайне палăртса тухăр. Сăмах тĕпне кăтартăр.

4. Анаграмма тупсăмне пĕлĕр.

Эп – хула. Атăлпала
Эс ишсен анаталла
Çитĕн-кĕрĕн савăнса,
Тутарла саламласа.
Тĕрĕс эс ылмаштарсан
Сас паллисене – вара
Ÿсĕп эпĕ пахчара
Тутă кĕртĕп яшкăра.

5. 4-мĕш предложени хутлă е хутсăр пулнине çырăр. Предложени членĕсене палăртса тухăр.

6. Сăвăра пĕр йышши хупă сасăсен янăравлăхне мĕнле терминпа палăртаççĕ? Пĕр йышши уçă сасăсен янăравлăхне мĕнле калаççĕ? Илемлĕ сăмахлăхри тĕслĕхсемпе çирĕплетĕр.

7. Тĕслĕхре камăн ĕçне сăнласа панă-ши? Сăнар ятне, хăш хайлавран пулнине тата авторне палăртăр.

«Вăл саккăрпа пĕтĕрнĕ çип вĕçне сÿтет те кашнине уйрăмшарăн уйăрать, сÿтсе сÿслентерет, сÿсне чĕпĕте-чĕпĕте кăларать, вара чĕркуççи çине хурса ывăç тупанĕпе пусса сăтăрать. Çапла сăтăрнă май ик çип вĕçĕ кашни хăйне уйрăммăн пĕтĕрĕнет, ун-тан, иккĕшне пĕрлештерсе тытсан, курăнман машина ĕçленĕ пек, куça хупса иличчен явăнса ларать».

8. Çак сăмахсене кама кам халалласа çырнă? Скобкăсем вырăнне мĕнле псевдоним çырмалла? *Ала çăлтăр* тени вырăсла мĕнле пулать?

«(…)… Пĕр ушкăн çăлтăрăн чăвашла ячĕ. Урăхла ăна Ала çăлтăр теççĕ. (,,)…Ушкăн çăлтăрăн асли. Пайтах çăлтăр çуталчĕ ун тавра…» .

9. Этеме мĕнпе амантма, ÿкерме, ÿксен çĕклеме пулать? Çак шухăш мĕнле поэтăн хăш сăввинче ÿкерĕннĕ?

10. Чăвашсен чи малтанхи симфониллĕ «Сăрнайпа палнай» хайлавне çыраканĕн, паллă çыравçăн ятне, ашшĕ ятне, хушаматне çырăр.